*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

21 (2433) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи ака уйăхĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014,
пуш, 21

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХЎТЛĔХ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## Чунтан парăннисем


Светлана Степанова

**Кашни кăларăмра тенĕ пек вулакансене хаçат-журнал çырăнмаллине аса илтеретпĕр. Пĕр çур çула ирттерсе яратпăр кăна теприншĕн пăшăрханма пуçлатпăр: информаципе технологи ĕмĕрĕнче – Интернет тыткăнĕнче – пурăнатпăр-çке. Компьютера ярса пĕр сăмах çеç пичетле – вун-вун хыпар сиксе тухать. Çамрăксем çапла тăваççĕ те – хăйсене мĕн кирлине пĕтĕмпех тĕнче тетелĕнчен пĕлеççĕ. Аслă ăру çыннисемшĕн вара пичет кăларăмех хаклă. Кирек хăш вăхăтра алла илме, кирлĕ пулсан кăранташпа йĕрлеме май пуррипе паха вăл. Пенси укçине те почтальон аллинченех илесшĕн ватăсем. Мĕн пур хыпар-хăнара пĕлекен çынпа виç сăмах хушниех мĕне тăрать. Чĕрĕ калаçăва мĕн çитĕ!**

### Айлатнипе ĕç тăваймăн

Светлана Степанова кунсерен 26 çухрăм утать. Элĕкри Гагарин урамĕнчен пуçласа Витеçуч ялĕ таран килĕрен киле çитет.

Шăмат кунсерен ăна çиччĕмĕш класра вĕренекен ывăлĕ пулăшать. «Хам пенси панă хушăра вăл хаçатсем валеçет», – тет С. Степанова. Пилĕк ачине пĕчченех пăхса ўстерет хĕрĕхри хĕрарăм. Иккĕшĕ шкула çўреççĕ, пĕри – ача садне, кĕçĕннисем – Артемийпе Арсений йĕкĕрешсем – çултăлăк çурăран çеç каçнă-ха. Элĕкре икĕ пўлĕмлĕ хваттерте пурăнаççĕ. Кредитпа туяннă ăна. Татăлса пĕтмен-ха. «Аптрамастпăр, патшалăх та пулăшать, пĕр ача укçи уйăхсерен кредит тўлеме кайса пырать. Çемьене тăрантаракана çухатнăшăн паракан укçа та пулăшу. Ачасене пăхма Тукачра пурăнакан анне пулăшать. Турра шĕкĕр, ялĕ инçе мар. Пурнăçа ўпкелеместĕп», – айлатасси-хашлатасси асра та çук хĕрарăмăн.

3-мĕш стр. ➔

## КĔСКЕН

**Ял хуçалăх министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – 2013 çул пуçламăшĕ тĕлне ял хуçалăх таварĕ туса илекенсен паркĕнче 3622 трактор, тырă выракан 980 комбайн, выльăх апачĕ хатĕрлекен 394 комбайн пулнă. Çав вăхăтра хурçă утсен – 60, комбайнсен 50 процентĕпе производствăра 10 çул ытла усă курнă. 25-30 çулччен хире тухакан техника та çук мар.**

**Красноярскри «Енисей» хир карапĕсем кăларакан завода Шупашкара куçарнă. Çавна май кăçал Шупашкарти промышленноç тракторĕсен заводĕ «Агромаш – 3000», «Агромаш – 4000» маркăллă комбайнсем кăларма тытăнĕ.**

**Строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕн сăмахĕсем тăрăх – кăçал çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтермели федераци программине пурнăçлама республика бюджетĕнче 210 млн тенкĕ пăхса хăварнă, вырăнти бюджетсенче – 63 млн, федераци бюджетĕнчен 126 млн тенкĕ килмелле. Ку укçапа 600 çемье хваттерлĕ пулĕ.**

**Иртнĕ çул мĕн пур тытăмри хуçалăхра 6200 лаша тытнă. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе уйрăм çынсен – 200 ут. Чи нумайăи Патăрьел районĕнче, сахалли – Çĕрпў тăрăхĕнче. Улатăрпа Пăрачкав, Красноармейскипе Хĕрлĕ Чутай, Çĕрпўпе Шупашкар районĕсенчи фермерсемпе уйрăм çынсем январь пачах усрамаççĕ.**



**ПАЯН** кун тăршшĕ 12 сехет те 15 минут. Уйăх катăлса пырать. Кунпа çĕр танлашаççĕ. Хăва кăчки çурăлать. Чăн-чăн çуркунне пуçланать.

**ЫРАН** – хĕл вĕçĕ, çур пуçламăшĕ. Кайăксем йышлăн вĕçсе килеççĕ. Кунĕ ăшă пулсан хĕрĕх кун ăшĕ тăрĕ тенĕ, сивĕ пулсан – хĕрĕх кунччен ирхи тăм ўкĕ.

**ВИÇМИНЕ** – çурхи шыв çулне кăтартакан Вĕçелис кунĕ. Тĕп сакай, нўхреп, çуртпа хуралтăсем тавра шыв çулĕсем уçнă.

## КИЛ КАРТИ

### Çăмарта туччăр

Хĕл каçипе саппаслăх хатĕрленĕ апат самаях йăшать.

Çуркунне кайăк-кĕшĕк рационне кăшман, кишĕр, çĕр улми, купăста çулçи, хырпа чăрăш лăсси кĕртмелле.

Тырри нумаях та юлман-и? Апла ытларах çĕр улми çитермелле. Калăпăр, сĕлĕ, тулă, урпа вырăнне çĕр улми памалла. Утă юлнă пулсан ăна лайăх вĕтетсе пăтратнипе хутăштарма май пур. Витаминлă çав тери лайăх хутăш пулĕ. Хур-кăвакала хаклă йышши концентратсем туянса париччен ытларах апат-çимĕç юлашки, пахча çимĕç, утă-улăм туранчăкĕ, тымар çимĕç памалла. Тыр-пула çапла пĕрекетленин усси пурах. Хур кунне 200 г утă е арпа-хывăх çиме пултарать, кăвакал вара 500 г таран. Унсăр пуçне пăтратса панине 100-150 г çĕр улми тата 150-200 г авăртнă тырă е хывăх хушмалла.

Çуркунне çăмарта лайăх туччăр тесен чăхсене шăтарнă е çĕпрелетнĕ тырă памалла. Ку апата витаминпа пуянлатать, кайăк-кĕшĕк те унашкаллине ахальлинчен лайăхрах çиет. Çăмарти те шултрарах та пахарах пулĕ.

**Ытларах чухне сĕлĕпе урпана шăтарса параççĕ. Малтан тырра пўлĕм температури таран ăшăтнă шывра 24-36 сехет шўтерсе лартмалла. Унтан ăна лапка çине 2-3 см хулăнăш сармалла. Тырра 20-23 градус ăшă пўлĕмре шăтармалла.** Сăмсаланни хатĕррине пĕлтерет. Шăтарнă тырра çитерсен чăх-чĕп çăмарта лайăх тăвать, пахалăхĕ ўсет.

**Апата çĕпрелетни.** Авăртнă тырă е çăнăх хутăшĕ (минераллă хутăшсем хушманни) илмелле. Апата 18-20 градус температурăра çĕпрелетмелле. 1 кг çăнăх хутăшĕ çине 15-20 г пасар çĕпри ярса ирĕлтернĕ 1,5-2 литр ăшă шыв (35-40 градус) хушмалла, лайăх пăтратмалла. 6-7 сехете яхăн лартмалла. Кашни 1,5-2 сехетрен пăтратса тăмалла. Çĕпрелетнĕ апата вĕтетнĕ ытти апата хушмалла. Пăтратса панă пĕрчĕклĕ апата кайăк-кĕшĕке çитермелле.

## ПАХЧИ-ПАХЧИ

### Хурлăхан сăвăсĕ

Хăш-пĕр хурлăхан кăчки ыттисенчен ытла мăнтăр пулнипе уйрăлса тăрать тĕк – унта сăвăс пур. Кăчкă ăшĕнче хĕл каçнăскер çĕнĕ çĕре куçма вăхăчĕ çитессе кĕтет. Вăхăчĕ вара хурлăхан чечек çурнă самант, ун чухне сăвăссем хĕллехи килĕнчен тухса çамрăк çулçă кăкне вырнаçаççĕ. Унта малалла ĕрчесе каллех хĕл каçма юлаççĕ. Сăвăс тĕме пĕтĕмпех ярса илсен çырла çиесси пулмĕ. Кăчкă ăшĕнче пурăнакан сăвăспа кĕрешме хими те пулăшаймĕ. Сиенленнĕ туратсене касса илнинчен е чирлĕ кăчкăсене алăпа пухнинчен лайăхраххи çук та тăр. Пĕтĕмпех сиенленнĕ тĕме чавса кăларса çунтарса ямалла. Сăвăс сарăласран вара профилактика вырăнне чечекре ларнă тапхăрта ыхра настойĕпе сирпĕтме юрать. Чечек папки çурăлас умĕн çавăн пекех чечеке ларса сўнсенех çакнашкал шĕвекпе сирпĕтмелле: 10 л шыва пускăч витĕр кăларнă 200 г ыхра ярса пăтратмалла, сăрăхтармалла та тўрех пĕрĕхтермелле.




*Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли малтанхи хакпа –*

**460 тенкĕ те 86 пус –**

*çырăнса ĕлкĕрĕр.*

*Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ўсет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар-шăмат куна»*

**218 тенкĕ те 22 пуспа**

*çырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлетĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.*

## СĔНЎ-КАНАШ

***• Пăрăç вăррине ним тумасăр типĕлле аксан 2-2,5 эрнерен кăна шăтса тухма пултарать. Вăрлăха хăвăртрах вăратас тесен 4-5 сехетлĕхе ăшă шыва ярса лартмалла, унтан нўрлĕ татăкпа чĕркесе полиэтилен хутаçа чикмелле (типесрен), çакăн хыççăн ăна шăтарма ăшă вырăна хумалла. 5-7 кунран сăмсаланĕ те. Шăтарнă вăрлăха нўрлĕ тăпрана лартмалла. Вăхăчĕ çителĕклĕ пулсан вăрлăха типĕлле акма та юрать, ун пек чухне вăрлăх савăтне ăшă çĕре (30 градус) лартмалла.***

* * *

***• Юр кайса пĕтиччен катка-пичкене юрпа тултарса юлмалла.***

| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Шупашкарта | Вăхăт | 21.03 | 22.03 | 23.03 | 24.03 | 25.03 |
| Температура, $^0$C | 2-4 сехетре | –11 | –1 | –1 | +2 | –1 |
| | 14-16 сехетре | –1 | +5 | +5 | +7 | +7 |
| Юр çăвать | | – | – | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 752 | 745 | 749 | 750 | 752 |

ХŬТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Кăçал ветерансене, инвалидсене тата инвалид ачаллă çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтерме 51 млн тенкĕ уйăрĕç. Нумай ачаллă 34 çемьене çак тĕллевпе 85,8 млн тенкĕ пама палăртнă. 2014 çулта 253 тăлăх ача хваттер илĕ.**

**Чăваш Енре вăхăт çитмесĕрех пенсие тухнă 17 пин хĕрарăм пурăнать, вĕсем 5 е ытларах ача çуратса ÿстернĕ.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Икĕ çул кĕтмелле

**?** **Колхозра 30 çул ытла дояркăра ĕçленĕ эпĕ. Ялта нумай çул ĕçленисене пенси хăпартса параççĕ тенине илтнĕччĕ. Хăçан ÿстерĕç-ши?**

**Юлия Петровна. Çĕрпÿ районĕ.**

Ял ĕçченĕсене страхлав пенсийĕ çумне хушса тÿлесси 2016 çултан вăй кĕрĕ. Ял хуçалăхĕнче 30 çултан кая мар ĕçленĕ, халĕ те ялтах пурăнакан ĕçлемен пенсионерсене 25 процент хушса тÿлеме палăртнă.

### Ват чулĕ

**?** **Пирĕн йăхра ват хăмпинче чул пуханнипе нушаланакансем пур. Мĕншĕн пухăнать-ши вăл? Инкек ан çыпăçтăр тесен мĕн тумалла?**

**Тамара СЕРГЕЕВА. Куславкка.**

Тăвансем хушшинче çак чирпе чирлекенсем пулсан пушшех асăрханмалла. Чи малтанах иммунитета çирĕплетмелле, апат ирĕлтерекен орган сывă пултăр тесе тăрăшмалла. Пыршăлăхри бактерисем ват хăмпине лексе шыçă пуçарма (холецистит) пултараççĕ.

Ватра холестерин шайĕ ÿссе каясран асăрханмалла. Ытларах улма-çырлапа пахча çимĕç çимелле, тип çупа усă курмалла. Выльăх çăвĕпе ăшаланă апат-çимĕçе май пур таран сахалтарах тутанмалла. Мăнтăрланса каясран, юнри сахăр шайĕ ÿсесрен сыхланмалла.

Сывă пурнăç йĕрки тытса пымалла, кунне 4-5 хут апатланмалла, анчах сахалшар çеç çимелле. Ун чухне ват чулĕ пуханмĕ.

### Хĕрĕхрен каçсан

**?** **Хĕрĕх урлă каçсан хĕрарăмсен аш çимелле мар теççĕ. Мĕн çимелле вара?**

**Марина.**

Хĕрĕхрен каçсан аш-какая чăнласах та май пур таран сахалтарах çиме сĕнеççĕ. Ун вырăнне пулăпа тинĕс çимĕçĕсемпе усă курмалла. Тăватă теçеткене çитнĕ хĕрарăмсен эрнере 2-3 хут «пулă кунĕ» тусан аван. Уйăх хушши пулма пăрахнă тапхăрта (50-55 çулта) какайпа пулла эрнере 1-2 хут тутансан та çитет. Ытларах пăтă таврашĕ, çамрăклатакан пахча çимĕçпе (помидор, сухан, ыхра, баклажан, кабачок, йÿç кăшман) улма-çырла çимелле. 50 çултан иртсен остеопороз (шăмă тытăмĕ ванса вĕтĕ шăтăклă пулни) аталанас хăрушлăх тăруках ÿссе каять. Çавăнпа та çуллă мар сĕт-турăх пирки те манмалла мар. 45 çултан иртсен çын çулсеренех шăмă тытăмĕн 1 процентне çухатать. Организма тăтăшах кальципе тивĕçтерни вара шăм-шака сыхласа хăварма пулăшĕ.




Ипотечный кредит

Звонок по России бесплатный
8 800 200-02-90 | www.rshb.ru
ОАО «Россельхозбанк». Генеральная лицензия Банка России № 3349. Реклама.

г. Чебоксары, Президентский б-р, 31
тел.: 8 (8352) 66-22-06

## СПЕЦИАЛИСТ КАНАШĔ

### Пуç мимине ĕçлеттермелле

Вăхăт çитмесĕр ватăлас мар, ăспатăнпах çÿрес тесен пуç мимине тăтăшах ĕçлеттермелле. Мĕнле майпа-и? Кăсăклă кĕнеке вуланинчен пуçласа пуç ватмăшсен тупсăмне шырани, ют чĕлхе вĕренни таранах. Çаксем тимлĕхе ÿстернипе пĕрлех ас тăвăма лайăхлатма, пуç мимине çирĕплетме кирлĕ. Ку таранччен çÿç турине сылтăм алăпа тытнă пулсан халĕ сулахаййипе тураса пăхăр. Шăл тасатнă чух та çаплах тăвăр. Паллах, çăмăлах пулмĕ, анчах ку таранччен пăлахая пенĕ пуç мимин иккĕмĕш çуррине те ĕçлеттерни хăвăршăн çеç усăллăрах пулĕ.

Тепĕр çĕнĕлĕх. Апата куçа хупса çисе пăхăр, çимĕçĕн тутине, шăршине май пур таран лайăхрах туйма тăрăшăр.

Ал айне лекнĕ кирек мĕнле япалана илĕр. Ăна сăнласа пама мĕнле япала ячĕсемпе усă курма пулать? Миçе сăмах тупаятăр? Ансат пек туйăнакан çак ĕç ас тăвăма, тимлĕхе, тавра курăма ÿстерме пулăшĕ.

Аслă ăру çыннисен сывă пурнăç йĕрки тытса пымалла. Сиенлĕ йăласенчен хăтăлмалла, вăхăтра çывăрмалла, тĕрĕс апатланмалла, усă сывлăшра çÿремелле.

**Ирина ГОЛИКОВА, терапевт.**

## АЛ АЙĔНЧИ

### Ыраш эмелĕ

**Ал-ура сыпписем ыратсан.** Ыраш çăнăхĕпе пылран хытă чуста çăрмалла, унтан ăна марльăпа чĕркесе ыратакан вырăна хумалла. Ирпе хайхи вырăна пан улми уксусĕпе сĕрмелле.

**Касса кайса ÿсĕрсен** те ыраш çăнăхĕ пулăшĕ: ăна типĕ çатмана хурса хăмăрланичченех ăшаламалла, унтан вĕреме кĕнĕ шывпа хутăштармалла: 1 стакан шыва 2 кашăк ыраш çăнăхĕ, кăшт тип çу хушса ĕçмелле.

**Çăпан** тухнипе аптракансен шыçă тĕлне çăнăхпа пылран çăрнă пашалăва хумалла. Ал-урана ÿксе ыраттарсан та пулăшĕ ку.

## ВУЛАКАН СĔНЕТ

### Укçа куракĕ пулăшрĕ

Пÿрепе чирлесе ÿксен ăна килте ÿстерекен укçа куракĕпе (толстянка, крассула) сиплерĕм. Чи пысăк темиçе çулçă татса вĕтетрĕм. Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва ăна 1 чей кашăкĕ ятăм, хупласа сехете яхăн тăрăлтарса лартрăм, сăрăхтартăм. Икĕ эрне таран кунне 3 хут, апат умĕн, 2-шер кашăк ĕçрĕм.

Халăхра укçа куракĕн шывĕпе пÿре, цистит чирĕсенчен сипленеççĕ.

**Анна ИВАНОВА.**

### Виçерен иртмесĕр

Амалăх măйĕнчи сиенсĕр мăкăльрен (полип) шĕпĕн куракĕн шывĕпе хăтăлтăм. Кунне 1 хут амалăх умне шĕпĕн куракĕпе тунă шĕвекпе спринцевани турăм. 5 кун сипленнĕ хыççăн пĕр эрне кантăм унтан тепĕр хут сиплентĕм.

Сиплĕ шĕвеке çапла хатĕрлемелле: вĕреме кĕнĕ çур литр шыва 2 кашăк тин татнă (е 1 кашăк типĕтнĕ) шĕпĕн куракĕ ярса 2 сехет тăрăлтарса лартмалла. Унтан 4 хут хутлатнă марля витĕр сăрăхтармалла. Пĕрре сирпĕтнĕ чух шĕвеке пĕтĕмĕшпех усă курмалла.

Шĕпĕн куракĕ наркăмăшлă ÿсентăран, çавăнпа та виçерен ытла усă курма та юрамасть.

**Надежда.**

### Лимон çăвĕ

Грипп эпидемийĕ вăхăтĕнче лимон çăвĕ ĕçни усăллă. Ăна çапла хатĕрлеççĕ: лимона 1 минутлăха вĕреме кĕнĕ шыва яраççĕ, унтан хуппипех, анчах вăррисĕр аш арманĕ витĕр кăлараççĕ, 100 г маргарин, 1-2 кашăк иçĕм çырли хушаççĕ. Çак çăва сивĕтмĕшре упрамалла. Грипп вăхăтĕнче лимон çăвĕ сĕрнĕ 6-8 хура çăкăр татăкĕ çимелле.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Организм йăвашланса çитсен.** Пуçлă 2-3 сухана 200 г услам çупа ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла. Çулăм çинчен илсен каллех ирĕлтернĕ 200 г услам çу, çур кило пыл хушса пăтратмалла. Кĕленчене куçарса сивĕтмĕше лартмалла. Çупа пыл хутăшне çăкăр çине сĕрсе кунне 3 хут çимелле. Анчах пĕверпе чирлисен ку рецептпа усă курма юрамасть.

**Сунасран.** Вĕретсе сивĕтнĕ 1/3 стакан шывра 10 мл 20 процентлă прополис настойкине ирĕлтермелле. Çак шĕвеке сăмсана кунне 5 хут 3-4 тумлам ямалла.

**Ÿте пĕсертсе илсен.** 10 г прополис вĕтетсе 2 кашăк тип çупа хутăштармалла, шыв пăсĕпе ирĕлтермелле, кĕленчене ямалла. Пĕсертсе илнĕ вырăна унпа кунне темиçе хут сĕрмелле, нимĕнпе те çыхмалла мар. Маçа сивĕтмĕшре упрамалла.

**Гайморитран.** Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 1 чей кашăкĕ типĕтнĕ сар çип ути (зверобой) ярса лартмалла. Кăшт сивĕнсен унпа сăмса хăвăлне чÿхемелле.

**Сыпăсем ыратсан.** 1 çăмарта саррине 1 чей кашăкĕ скипидарпа хутăштармалла, 1 кашăк пан улми уксусĕ хушмалла. Хутăша ыратакан вырăна сĕрсе çиелтен компресс хучĕпе витмелле, çăм тутăрпа çыхмалла. Çапла – ыратни иртиччен.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ÇЫРĂНТАРУ – 2014

Тăлăх çынпа пĕр «Хресчен сассисĕр» кил.
Ватти-вĕтти, яш-кĕрĕм,
Васка, çырăнса ил!

Хресчен сасси –
226 тенкĕ те 62 пус.
Индексĕ – 54838

Хресчен сасси- Кил –
102 тенкĕ те 90 пус.
Индексĕ – 43887

ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ ХӲТЛĔХ СЫВЛĂХ

ТĔПЕЛ

## КĔСКЕН

**Хальхи вăхăтра Чăваш Енри шкулсенче пĕрремĕш классенче 12827 ача вĕренет. Çитес вĕренӳ çулĕнче пĕрремĕш классене 13565 ача пырĕ. Шупашкар хулинчи хăш-пĕр шкулта хушма пĕрремĕш классем уçĕç.**

**Иккĕмĕш е ун хыççăн çуратнă ачашăн паракан амăшĕн капиталĕн виçи 429 пин те 408 тенкĕпе танлашать. Амăшĕн укçипе усă курма май паракан сертификата ку таранччен республикăра пурăнакан 50 пин ытла çемье илнĕ.**

## ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ

### Çĕнтерӳçĕсене тивĕçлипе хаклаççĕ

**? Олимпиада вăййисенче мала тухнă спортсменсене тата вĕсен тренерĕсене мĕн чухлĕ укçа панине пĕлес килет.**

**Е. ПЕТРЕЙКИНА. Шупашкар.**

Сочири Олимп тата Паралимп вăййисен çĕнтерӳçисене çапла чысланă: «ылтăн» медальшĕн – 4 млн тенкĕ, «кĕмĕлшĕн» – 2,5 млн, «бронзăшăн» – 1,7 млн тенкĕ. Унсăр пуçне спортсменсене хваттер е машина парса хавхалантараççĕ. Тĕп тренера спортсмена тивĕçнĕ премин 60-70 процентне чухлĕ тивет. Тренер штабĕнчи специалистсене те парнесĕр хăвармаççĕ.

# Чунтан парăннисем

1-мĕш стр.

Тĕрĕсрех каласан, вăхăчĕ те çук. Аслă хĕрне качча панăскер халĕ хăй те кукамай ята илнĕ. Хĕрне пулăшассишĕнех пĕр кредичĕпе таталмасăрах теприне илме ăшталанать.

Уйăхне 13-15 пин тенкĕлĕх тавар, 5-7 пин тенкĕлĕх хаçат-журнал сутать Светлана Анатольевна. «Сирĕн хаçата юратаççĕ, çитес çур çул валли çырăнтарма пуçăннă. Пенси валеçмессерен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çырăнтаратпăр. Хăшĕсем хăйсемех аса илтереççĕ. Алевтина Игнатьева ав кашни çулах «Тăван Атăл» çырăнать. Ача-пăча журналĕсене ыйтакансем пурри те савăнтарать. Хальчченхинчен кая мар çырăнтарма тăрăшăпăр», – пĕтĕмлетет почтальонка каймаллине систерсе.

### Ăçта хĕстерсе хăвармалла?

Элĕкри тĕп урамра пурăнакансене хаçат-журналпа Цилия Викторова тивĕçтерет (тĕлĕнтермĕш ята ăна ашшĕ парнеленĕ, банкра çакнашкал ятлă паллă çын êçленĕ-мĕн). Почтальон сумкине çакнăранпа 18 çул ĕнтĕ. Аллинче яланах икĕ хутаç. Пĕринче çырăнса илнисем валли, тепринче – сутмалли. Сутмалли чыхса тултарни çырăннисем валли илнинчен те хулăнрах курăнать. «Паян икĕ пин тенкĕлĕх илтĕм-ха, çитĕ-ши? Çынсем хăйсем ыйтса илеççĕ», – тет Цилия Ивановна сумлă хутаçне кăтартса. Районти организацисем тăрăх каяканскерĕн сутлăх хаçат-журналне, чăн та, хăвăрт илсе пĕтереççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ уйăхне 17-18 пин тенкĕлĕх те сутать. Уйрăмах ача-пăчапа сĕнӳ-канаш кăларăмĕсене килĕштереççĕ иккен. Туянакансенчен ытларахăшĕ хĕрарăмсем.

Икĕ-виçĕ хутлă çĕнĕ çуртсенче почта ешчĕкĕсем çукки пăшăрхантарать почтальона. Кашни хваттер алăкне шаккама тивет. Килте пулсан уçĕç-ха. Пулмасан? «Кам ăçта êçленине пĕлетĕп те чылай чухне çынниссене êç вырăнĕнче тытма тăрăшатăп», – тет Цилия Ивановна. Нушаллă паллах, анчах почта ешчĕкне камăн лартмаллине паян кун та уçăмлатаймаççĕ. Коммуналлă хуçалăх тытăмĕ ку êçе хăй çине илесшĕн мар, почта ахаль те чухăн, çуртра пурăнакансен пĕрле пухăнса укçа пухма хевте çитмест. Хаçат валеçекен малашне те нуша куртăрах тени ĕнтĕ ку.

Ку чухне Интернет урлă япала çыртарса илекенсен йышĕ ӳссе пырать. Элĕк тăрăхĕнче унашкал заказсемпе тата EMSсемпе (васкавлă документсемпе посылка таврашне вырăна хăвăрт çитерес-си) ытларах Цилия êçлет. Китайран тем те пĕр çырăнса илеççĕ: алла çыхмалли сехетрен пуçласа тăхăнмалли таранах. Хамăр çĕр-шывринчен чылай йӳнĕрех пулнипе туянаççĕ вĕсене.

### Выльăх та тытмасан

Йăлкăшпа Уйкас ялĕсенче 200-е яхăн хуçалăх. Килĕрен-киле хаçат валеçме те, картиш тулли выльăх-чĕрлĕхне пăхма та ĕлкĕрет Альбина Евдокимова. 3 ĕне тытаççĕ вĕсем. Пăрушкисем пур-ха тата. Çулталăк тăршшĕпе 5-6 сысна ӳстерсе пусаççĕ. Чăххи-чĕппин шучĕ те çук, почтальонка вĕсем пирки «тӳлевсĕр приложени» тет. Кунсерен 30-40 литр сĕт параççĕ. Сĕт пуçтарма таçтан та килеççĕ: Пăрачкав, Çĕмĕрле, Вăрнар, Шупашкар пайтаçисемпе Элĕк райповĕ таранах. Анчах хакĕсем пурин те пĕрешкелех.

– Пĕр эрне пек 23 тенкĕпе пуçтарнăччĕ, халĕ каллех 20-пе. Утă-уламĕ çителĕклĕ. Пай çĕрĕ тăрантарать, кăшманне те хамăрах туса илетпĕр. Êçлеме кăна ан ӳркен.

– Мĕнле маттур вĕт-ха эсир, – тетĕп çырла пек чипер ларакан хĕрарăма ытараймасăр.

– Ай-уй, ялта тата мĕн туса пурăнмалла? – чăннипех те тĕлĕнет вăл. – Сысние малтан хамăр çăвăрлаттараттăмăр. Халĕ ансата вĕрентĕмĕр мар-и? Пасара кайса туянатпăр. Мĕн ĕлкĕрмелле марри пур унта. Çемйипех êçлетпĕр.

Хастар почтальонка пенсионерсене тав тăвать. Вĕсем çырăннипех плана тултарса пырать вăл. Тăрăшуллă êçĕшĕн «Раççей почтин» Чăваш Енри управленийĕ хисеп хучĕпе те чысланă ăна. «Хальлĕхе иртерех-ха, ака, çу уйăхĕсенче çине тăрсах çырăнтаратпăр», – тет Альбина Зиновьевна.

### Хамăртан нумай килет

Почтальонсем маттур пулнине Элĕкри почта çыхăну уйрăмĕн пуçлăхĕ Любовь Петрова та палăртать. 19 яла хаçат-журналпа 9 почтальон тивĕçтерет. – Ялĕсем пĕчĕк. Пĕр урам – пĕр ял. Калăпăр, Янкурас, Сморотин, Иштек, Урмай ялĕсене пĕр почтальон тивет. Аяккарах вырнаçнисене, пысăкрах участоксенче – Торăпкасси, Хирлеппуç Мĕлĕш, Исванккă, Тимĕрçкасси, Пĕчĕк Йăлкăш – хаçат-журнал салатакан почтальонсене виçĕм çул Çĕмĕрле почтамчĕ велосипед панăччĕ. Почтальонкăсем кашни уйăхра икĕ хут çынсем патне киле кĕреççĕ: пенси пама тата социаллă тӳлевпе тивĕçтерме. Кашнинчех мĕн кирлипе интересленеççĕ. Кама япала çумалли порошок, кама – печени, кама туртмалли кирлĕ – пĕтĕмпех пĕлсе тăраççĕ. Тепре кайнă чухне парса хăвараççĕ.

**– Любовь Ивановна, çак уйăх вĕçленичченех хаçат-журнала хальхи хаксемпе çырăнса юлма май пур. Ака уйăхĕнчен хаксем хăпараççĕ. Иккĕмĕш çул çул валли хальтерех çырăнтарсан пит аванччĕ.**

– Çуркуннехи çырăнтару яланах йывăртарах килет. Хальтерех, çур акине кĕрсе кайиччен, çынсем хур-кăвакал, тырă туянма, анасене сухалаттарма тытăниччен çырăнтарма тăрăшмаллине почтальонсене те пит лайăх пĕлеççĕ. Хамăр та тăтăшах аса илтеретпĕр. Чĕлхе-çăвар çыпăçуллă пулни те, хамăра лайăх тытма пултарни те питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çынпа хаçат çырăнтарнă кун çеç лайăх пулмалла мар-çке. Тепĕр çын вăл почтальона хисеплесе те пулин çырăнать. Хамăртан нумай килет. Ĕлĕкхилле килсерен 6-7 экземпляр çырăнакан сахал паян, пĕр-иккĕ çырăнсан та тем пекех темелле.

**– Сирĕн почтальонсем хул пуççи урлă çакмалли сумкăна килĕштермеççĕ курăнать. Пĕри те тепри хутаçсемпе тухса кайрĕç.**

– Сумкине çулсеренех икĕ тĕрлине те паратпăр: хул пуççи урлă çакмаллине те, çакăллине те. Кам хăшне килĕштерет. Галина Семенова авă ĕлĕкхиллех ума çакмаллипе çӳрет, урăххи кирлĕ те мар ăна. Тепринсĕн алла тытмалли меллĕ. Тавар чикме лайăх пулнипе те çыхăннă-тăр ку. Çапах та юр-çумăрта сăран сумках аван. Почтальонсене çăвăн пекех резина тата сукна атă, фуфайка паратпăр.

**– Пенси ӳсĕмĕнчисене улăштарма çамрăксем килĕç-и?**

– «Êç ветеранĕ» ята илме стаж çитменнисем килсен кăна-тăр. Килкелесе пăхнисем пулнă. Виçĕ кун пек êçлеççĕ те тӳрех мăй таран «тăранаççĕ». Пĕрмаях утмалли те хăратать.

**– Êç укçи те илĕртеймĕ.**

– Êçленине кура тӳлеççĕ. Миçе хаçат, миçе квитанци, миçе открытка... çитерсе панă. Хаçат-журнал, тавар сутни – пурне те шута илеççĕ. Пур пĕрех почтальон укçи ăмсанмаллиех мар ĕнтĕ. Çак êçе чунтан парăннисем кăна êçлеççĕ кунта.

**Елена НИКОЛАЕВА.**


## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

2. **АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

3. **АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

4. **Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

5. **Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

7. **Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

9. **Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, кирп. бой. Т. 89033583021.

14. **Станки для валяния валенок.** Т.: 89278617589, 89373810585.

15. **Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

16. **Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

20. **Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

19. **Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

22. **ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

23. **Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

24. **ГРАБЛИ, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

33. **Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

35. **Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. Т. 89373866629.

45. **Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.


## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунти кун, пуш уйăхĕн 24-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+)10.30-11.00 Шурăм пуç. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-18.00 Иксĕлми çăлкуçсем. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (12+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10,10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10,15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05- 20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00 22.00 – Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 – Новости. (12+)

**Ытлари кун, пуш уйăхĕн 25-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30 10.10-10.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Ялтан яла. (12+) 9.30-10.00 Социальный вопрос. (12+) 10.30-11.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14-15.00 Янра юрă! (хид-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.10-16.30 Эстрадный концерт. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.10-20.00 Чунлă эфир. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юн кун, пуш уйăхĕн 26-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30,10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Çĕр Сум. (12+) 11.30-12.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (6+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.10-22.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 22.10-23.00 Путешествие в историю чуваш. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерни кун, пуш уйăхĕн 27-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.30-9.00 Голос Республики. (12+) 22.30-23.00 Радиобиблиотека. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.30-15.00, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Чунлă эфир. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-14.30 Азы православия. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Сказочный вечер. (6+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрне кун, пуш уйăхĕн 28-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Радиобиблиотека. (12+) 10.10-10.30,14.10-14.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.10-9.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 9.10-10.00 Театральный абонемент. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.10-11.30, 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.10-19.00 Иксĕлми çăлкуçсем . (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăмат кун, пуш уйăхĕн 29-мĕшĕ**

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-7.30, 8.05-8.30, 10.05-10.30, 16.05-16.30, 18.05-18.30, Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Ялтан яла. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 11.05-11.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 9.05-9.30, 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00, 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.05-15.30 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Вăрман кĕвви. (12+) 19.05-19.30 Кĕрекене пуçтарăнсан. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕ. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

**Вырсарни кун, пуш уйăхĕн 30-мĕшĕ**

6.05-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.05-7.30, 9.05-9.30,18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 15.05-15.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Радиобиблиотека. (12+) 9.30-10.00 Тема дня. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Шурăмпуç. (12+) 17.05-18.00 Неформат. (12+) 18.30-19.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Сказочный вечер. (6+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** – 6.05-6.10, 7.00-7.05, 8.00-8.05, 9.00-9.05,10.00-10.05, 11.00-11.05, 14.00-14.05,15.00-15.05,16.00-16.05,17.00-17.05,18.00-18.05,19.00-19.05

## ТУНТИ КУН, 24

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ГЕТЕРЫ МАЙОРА СОКОЛОВА» 16+
23.20 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Познер» 16+
1.10 Х/ф «ОБЕЗЬЯНА НА ПЛЕЧЕ» 16+
2.50, 3.05 Х/ф «НИ ЖИВ НИ МЕРТВ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Осторожно, фальшаки!» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «Я БОЛЬШЕ НЕ БОЮСЬ» 12+
23.35 «Огонь, батарея! Неизвестная драма Севастополя» 12+
0.35 «Девчата» 16+
1.20 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
2.50 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК 19» 16+
3.45 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Мировые сокровища культуры»
12.30 «Линия жизни»
13.25 Д/с «Боевые крепости». «Крак де Шевалье»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Изображая слово». «В погоне за «Медным всадником»
15.40 Х/ф «АННА ПАВЛОВА»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.15 «Правила жизни»
20.45 Д/с «Ищу учителя». «Гадкие утята» Сергея Семенова»
21.25 «Тем временем»
22.15 Кино+театр. «НЕ ДЕЛАЙТЕ БИСКВИТЫ В ПЛОХОМ НАСТРОЕНИИ»
23.50 Д/ф «Николай Харджиев. Обитатель музея»
0.35 Д/ф «Культура: городское пространство»
1.15 С. Рахманинов. Концерт 4 для фортепиано с оркестром
2.40 И. С. Бах. Концерт для двух скрипок с оркестром. Солисты Виктор Третьяков и Наталья Лихопой

## ЫТЛАРИ КУН, 25

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ГЕТЕРЫ МАЙОРА СОКОЛОВА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «Смертельная пыль»
1.10 Х/ф «КРУТОЙ ЧУВАК» 16+
2.50, 3.05 Х/ф «ТРИ ДЮЙМА»

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Березка» Капитализм из-под полы»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «Я БОЛЬШЕ НЕ БОЮСЬ» 12+
22.50 Специальный корреспондент 16+
23.55 Т/ф «Трагедия Галицкой Руси» 12+
1.00 «Честный детектив» 16+
1.35 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
3.05 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК 19» 16+
4.00 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.35-9.55 Активная молодежь
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10 «Мировые сокровища культуры»
12.25, 20.15 «Правила жизни»
12.55 «Эрмитаж 250»
13.25 Д/с «Боевые крепости». «Шато Гайар»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Изображая слово». «Приключения Мухи Цокотухи»
15.40 «Сати. Нескучная классика...»
16.20 Д/ф «Мужская профессия»
17.05 Неделя русской музыки. Н. Римский Корсаков. «Шехеразада»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 Власть факта. «Имена Победы»
20.45 Д/с «Ищу учителя». «Павел Шмаков. Директор «Солнца»
21.30 «Игра в бисер»
22.15 Кино+театр. «АБОНЕНТ ВРЕМЕННО НЕДОСТУПЕН»
23.20 Д/ф «Камиль Писсарро»
23.50 Х/ф «АМЕРИКАНСКИЕ ГРАФФИТИ»
1.40 «Русская рапсодия»

## ЮН КУН, 26

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.30, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ГЕТЕРЫ МАЙОРА СОКОЛОВА» 16+
23.30 «Политика» 18+
0.40 Х/ф «ФАНТАСТИЧЕСКАЯ ЧЕТВЕРКА» 12+
2.40, 3.05 Х/ф «ДРУГАЯ ЗЕМЛЯ» 16+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Убийцы из космоса» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «Я БОЛЬШЕ НЕ БОЮСЬ» 12+
23.40 «Запрещенная история» 12+
1.40 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
3.05 Т/с «ЗАКОН И ПОРЯДОК 19» 16+
3.55 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 17.55 «Мировые сокровища культуры»
12.25, 20.15 «Правила жизни»
12.55 «Провинциальные музеи России» «Дербент город-музей»
13.25 Д/с «Боевые крепости». «Дувр»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Изображая слово». «В пространстве книги»
15.40 Власть факта. «Имена Победы»
16.20 Д/ф «Культура: городское пространство»
17.05 Неделя русской музыки. Н. Римский Корсаков. Симфонические картины из опер
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 «Абсолютный слух»
20.45 Д/с «Ищу учителя». «Курбатовы. Школа на заказ»
21.30 Д/ф «Человек по имени Кино»
22.15 Кино театр. «САМОУБИЙЦА»
23.50 Х/ф «БОЙЦОВАЯ РЫБКА»
1.20 Д. Шостакович. Концерт 1 для виолончели с оркестром

## КĔÇНЕРНИ КУН, 27

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15, 4.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 3.30 «В наше время» 12+
17.00 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ГЕТЕРЫ МАЙОРА СОКОЛОВА» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.10 «На ночь глядя» 16+
1.00, 3.05 Х/ф «БЕЛОСНЕЖКА И ОХОТНИК» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Извините, мы не знали, что он невидимый» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «Я БОЛЬШЕ НЕ БОЮСЬ» 12+
22.50 «На пороге вечности. Код доступа» 12+
0.40 Х/ф «ЧЕЛОВЕК, КОТОРЫЙ ЗНАЛ ВСЕ» 16+
3.00 Т/ф «БОЛЬШАЯ ИГРА»
4.25 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Туристический маршрут
9.15 Доступная среда
9.30-9.55 Виктор Петров. 30 лет на сцене. 2 часть (на чувашском языке)
11.30-11.50 Вести-Чăваш Ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «ПЕРРИ МЭЙСОН»
12.10, 17.55 «Мировые сокровища культуры»
12.25, 20.15 «Правила жизни»
12.55 «Провинциальные музеи России» Усадьба Шахматово
13.25 Д/с «Боевые крепости». «Конви»
14.10 Т/с «В ЛЕСАХ И НА ГОРАХ»
15.10 Д/с «Изображая слово». «Загадка Мастера»
15.40 «Абсолютный слух»
16.20 Д/ф «Виктор Титов. «Человек по имени Кино»
17.05 Неделя русской музыки. М. Мусоргский. «Ночь на Лысой горе»
18.10 Academia
19.15 Главная роль
19.30 Черные дыры. Белые пятна
20.45 Д/с «Ищу учителя». «На переломе или 40 000 учителей»
21.25 «Культурная революция»
22.15 Кино театр. «АД, ЦУРИКОВ И ДРУГИЕ»
23.50 Х/ф «КЛУБ «ЗАВТРАК»
1.25 А. Шнитке. Концерт для альта с оркестром. Солист Ю. Башмет

## ЭРНЕ КУН, 28

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.15 «Время обедать!»
13.00 «Доброго здоровьица!» 12+
13.45 «Истина где то рядом» 16+
14.00 Другие новости
14.25 «Понять. Простить» 16+
15.15 «Они и мы» 16+
16.10, 4.45 «В наше время» 12+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.30 «Голос. Дети»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 Х/ф «ПОСЛЕЗАВТРА» 12+
2.50 Х/ф «ГОЛУБОГЛАЗЫЙ МИККИ» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Другие берега Анастасии Вертинской»
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.40 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «ДЖАМАЙКА» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ЛИЧНОЕ ДЕЛО» 16+
18.30 «Прямой эфир» 12+
21.00 «Поединок» 12+
22.50 «Живой звук»
0.40 Х/ф «ПЛАТЬЕ ОТ КУТЮР» 16+
2.25 Х/ф «ВАМ ТЕЛЕГРАММА...»
3.50 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Точка зрения
9.25-10.05 Для вас любимые. Концерт по заявкам
11.30-11.50 Вести – ПФО
14.30-14.50 Вести-Чувашия
17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
19.40-20.00 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.20 Х/ф «ЧАСТНАЯ ЖИЗНЬ ПЕТРА ВИНОГРАДОВА»
12.00 Д/ф «Ускорение. Пулковская обсерватория»
12.25 «Правила жизни»
12.55 «Письма из провинции»
13.25 Д/с «Боевые крепости». «Мальборк» «Малага»
15.10 Х/ф «ВСТРЕЧНЫЙ»
16.55 «Царская ложа» Галерея музыки
17.35 Неделя русской музыки. Концерт из произведений М. Мусоргского
18.20 Д/ф «Мир искусства Зинаиды Серебряковой»
19.15 Смехоностальгия. Анатолий Папанов
19.45, 1.55 «Искатели» «Дракон Голубых озер»
20.30 Х/ф «УЧИТЕЛЬ»
22.15 «Линия жизни»
23.30 Х/ф «ЧАСТИЦА»
0.55 «Ни дня без свинга» Давид Голощекин
2.40 «Мировые сокровища культуры»

– Ремонт ТНВД
– Форсунки дизельные
– Компьютерная диагностика
– Капитальный и мелкий ремонт дизельных, легковых иномарок.
Тел.: 29-02-01, 8-927-667-17-34.
Реклама

## ШĂМАТ КУН, 29

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «12 СТУЛЬЕВ»
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Лайма Вайкуле. «Еще не вечер...» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10 «Жизнь не сказка» 12+
14.15 Х/ф «НА КРЮЧКЕ» 16+
15.50 «Голос. Дети»
18.15 «Кто хочет стать миллионером?»
19.20 Музыкальный фестиваль «Голосящий КиВиН» 16+
21.00 «Время»
21.20 «Сегодня вечером» 16+
23.00 «Что? Где? Когда?»
0.10 Х/ф «КЛЯТВА» 16+
2.10 Х/ф «СЛЕДОПЫТ» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

4.50 Х/ф «СТРАХ ВЫСОТЫ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Заповедник «Галичья гора» «Португалия. Азоры здесь тихие»
11.20 Вести. Дежурная часть
11.55 «Честный детектив» 16+
12.25 Х/ф «ЭГОИСТ» 12+
14.30 Шоу «Десять миллионов»
15.30 Субботний вечер
17.45 «Кривое зеркало» Театр 16+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «ЕСЛИ ТЫ НЕ СО МНОЙ» 12+
0.35 Х/ф «ПОДРУГИ» 12+
2.25 Х/ф «ЖИЗНЬ СНАЧАЛА»
4.00 Горячая десятка 12+

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «ВСТРЕЧНЫЙ»
12.20 Д/ф «Петр Алейников. Неправильный герой»
13.05 Большая семья. Вертинские. Ведущие Юрий Стоянов и Александр Карлов
13.55 Пряничный домик. «На кокошнике играю...»
14.25 Д/ф «Маскировка для выживания»
15.15 «Красуйся, град Петров!»
15.45 Государственный академический ансамбль танца «Алан» Республика Северная Осетия Алания
16.55 «Больше, чем любовь»
17.35 Х/ф «ЗА ДВУМЯ ЗАЙЦАМИ»
18.50 Д/ф «Кровный брат»
21.00 «Романтика романса» с «Большой оперой»
21.55 «Белая студия» Евгений Стеблов
22.35 Х/ф «УБИТЬ ПЕРЕСМЕШНИКА»
0.50 «РОКовая ночь»
1.55 «Легенды мирового кино» Кирилл Лавров
2.25 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
2.50 Д/ф «Франц Фердинанд»

## ВЫРСАРНИ КУН, 30

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 Х/ф «ОДИН ДОМА 4»
6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 «Один дома 4»
6.35 Х/ф «12 СТУЛЬЕВ»
8.10 «Служу Отчизне!»
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Свадебный переполох» 12+
13.20 «Кио. За кулисами иллюзий» 16+
14.25 Х/ф «8 ПЕРВЫХ СВИДАНИЙ» 16+
16.10 Х/ф «МУЖИКИ!..» 12+
18.00 «Точь-в-точь»
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
0.15 Бокс. Бой за титул чемпиона мира. Сергей Ковалев Седрик Агнью
1.15 Х/ф «ЧАЙ С МУССОЛИНИ»
3.30 «В наше время» 12+
4.20 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.20 Х/ф «ТАЙНА «ЧЕРНЫХ ДРОЗДОВ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному» Телеигра
10.20 Местное время. Вести Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Смеяться разрешается»
12.25, 14.30 Х/ф «БУДУ ВЕРНОЙ ЖЕНОЙ» 12+
14.20 Местное время. Вести Москва
17.00 «Один в один»
20.00 Вести недели
21.30 Х/ф «ТЫ БУДЕШЬ МОЕЙ» 12+
23.30 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
1.20 Х/ф «САЙД СТЕП» 16+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «МУЗЫКАЛЬНАЯ ИСТОРИЯ»
11.55 «Легенды мирового кино» Зоя Федорова
12.25 «Россия, любовь моя!». «Бурятский дацан»
12.50 Гении и злодеи. Алексей Брусилов
13.20 Д/ф «Год цапли»
14.10 «Пешком...» Москва подземная
14.40 «Вальдбюне 2012» Гала-концерт «Чайковскому посвящается...»
16.15, 2.40 «Мировые сокровища культуры»
16.30 «Кто там...»
17.05 Д/ф «Джаглавак принц насекомых»
18.00 Итоговая программа «Контекст»
18.40, 1.55 «Искатели» «Клад Ваньки Каина»
19.25 К юбилею киностудии. «Мосфильм» 90 шагов»
19.40 Х/ф «ЧЕЛОВЕК С АККОРДЕОНОМ»
21.10 «Линия жизни»
22.05 Балеты «АЛИСА В СТРАНЕ ЧУДЕС» и «КОНЬКОБЕЖЦЫ» в постановке Королевского балета «Ковент Гарден»
0.55 Д/ф «Маскировка для выживания»
1.45 М/ф «Обратная сторона Луны»

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**47. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 8-903-389-90-38, 48-92-77.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. Отруби, зерно, к/корм**. Д-ка. Т. 89613412236.

**59. Семена кормовой свеклы «ЛАДА»** высокой репродукции. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**77. Теплицы: 3х6** – 12000 р., **3х8** – 15000 р. Доставка. Т. 48-16-54.

**60. СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**66. Заборы кованые.** Т. 389587.

**117. ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**150. Гравмассу, песок** речной – от 10 до 25 тн. рейс, керамблоки, керамзит. Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**159. ОКНА, ДВЕРИ «БАРС».** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 89276689303.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк**, **КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

### РАБОТА

**100. Требуются монолитчики.** Т. 8-937-952-58-67.

### УСЛУГИ

**43. Натяжные потолки** за 1 день. Т. 89373972442.

**25. Установка забора** из профлиста, сетки-рабицы, секции ворот (распашные, откатные, автоматика). Гарантия. Тел. 8-917-651-80-57.

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает любые жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**115. Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.

**152**. **Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕпредактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пусна.
Заказ 1006 Тираж 22657

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем явапла.